# «Утасчĕ пĕрре урам тăрăх...»

***Пĕчĕк ача утма тытăнчĕ, акă калаçма та вĕренчĕ ĕнтĕ. Ашшĕ-амăшĕ хушнă вак-тĕвек ĕçсене те ăнлансах пурнăçлама пуçларĕ. Амăшĕ ăна-кăна тума калатчĕ пулсан, ашшĕ вара ытларах чухне куркапа шыв илсе килсе ĕçтерме ыйтатчĕ...***

***Ун чухне пĕчĕк хĕр ача ашшĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче утайми пуличчен йывăр аманнине ăнланман, паллах. Паян вара хăйĕн ашшĕ çинчен Людмила Гавриловна Иванова куççульсĕр аса илеймест:***



– Аслă Çĕнтерӳ тунинче вăл вăхăтра тăшмана хирĕç кĕрешнĕ (кам фронтра, кам тылра) кашни çыннăн тӳпи пысăк. Кашнинех паян тăванĕсем асра тытса чĕрере упраççĕ. Шел пулин те, манăн атте Гаврил Васильевич Волков пек «Астăвăм» кĕнекине кĕмесĕр юлнисем те пур-ха. Вăл, 1924 çулта çуралнăскер, хаяр вăрçăра çапăçнă. Вăрçа кайнисен районти списокне кĕртсе унăн ятне те ыттисенни пекех упрасчĕ. Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ, теççĕ мар-им?

**– Аçăр çинчен кăшт каласа парсамăр.**

– Атте Ойкас ялĕнче çуралнă, Мăн Сĕнтĕрти шкултан вĕренсе тухнă.1942 çулта ăна Ярославльти çар училищине вĕренме янă. Вĕренсе пĕтерсен çавăнтанах – вăрçă хирне çапăçăва. Паллах, вăрçа пирĕн районтан кайманран çар комиссариатĕнче те документсем пулман. Документсем тăрăх та, хăй каласа панă тăрăх та вăл çапăçусенче пурĕ виçĕ хутчен аманнă. Малтанхи иккĕшĕнче суранĕсем ытла йывăр пулманран часах çапăçу хирне таврăнма май пулнă. Виççĕмĕшĕнче вара тăшман пенĕ пуля çурăм мими витĕрех тухнă çав.

**– Вăрçă çулĕсене Гаврил Васильевич мĕнлерех аса илетчĕ?**

– 1943 çулхи çĕртме уйăхĕнчен пуçласа 1944 çулхи çурла уйăхĕччен стрелоксен 707-мĕш взводĕнче (3-мĕш Беларуç фрончĕ) хастар çапăçнине каласа паратчĕ. Вăл взвод командирĕ пулнă. 1944 çулхи çурла уйăхĕнче тан мар çапăçура питĕ йывăр аманать. Çак виççĕмĕш аману пулать унăн. Урăх вăрçă хирне тухаймасть, ура çине тăраймасть. Йывăр аманнине аса илсе ăна йытă çăлни çинчен калатчĕ. «Тăраймасăр выртнă чухне аннене тек кураймастăп-ши тесе юлашки вăя пухса хырăм çинче хамăрăннисем енне шума тăрăшрăм. Çав вăхăтра ума йытă пырса тăчĕ. Хут çырса ятарлă хутаç ăшне чиксе парса ятăм. Кăшт вăхăт иртсен икĕ йытă килсе тăчĕ. Мана тупса салтаксем лазарета илсе кайрĕç», – çăлăнăç вăхăтне çапла аса илетчĕ атте.

Беларуç çĕрне çитсен пĕр ялти старик вĕсене хăналанине калатчĕ тата атте. Çав ватă çын аттене килĕштерсе те ырă сунса: «Кăларса ан пăрах, сана сыхлатăр вăл», – тесе ал тутри парнеленĕ. Шăпах аманас умĕнхи çапăçăва кĕриччен ал тутрине, вăл ытла та вараланса пĕтнĕрен, атте хăйĕн кĕсйинчен кăларса пăрахрăм тетчĕ. Çапла аса илнĕрен, çак япалан пĕлтерĕшĕпе асамлăхĕ пулнă пек туйăнатчĕ.

Врач пĕр-икĕ çул пурăнсаса çеç шантарнă пулнă. Вăрçăран наçилкка çинче таврăнма тивнĕ аттен. Утайман çынна Мария Ивановна çамрăк учитель качча тухнă. 18 çул пăхнă ăна анне. Пире, Василийпе иксĕмĕре, тĕрĕстĕкел пăхса ӳстернĕ вĕсем. Эпир те çулла коляскăпа, хĕлле çунашкапа туртса çӳреттĕмĕр аттене. Кино курма та çапла илсе çӳренĕ ăна, пухусене те... 42 çулта атте вилсе кайрĕ.

Вăрçăра паттăрлăх кăтартнăшăн медальсемпе орденсем илме тивĕçлĕ пулнă атте. Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ те унăн иккĕччĕ.

**– Гаврил Васильевича халĕ Ильинка ял тăрăхĕнчен вăрçа кайнисен списокне кĕртнĕ. Çар билечĕпе пенси удостоверенийĕн копийĕсене Мăн Сĕнтĕрти шкула панă. Апла малашне Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин паттăрĕсем çинчен калаçнă чух сирĕн аçăр пирки те аса илмесĕр иртмеççех ĕнтĕ. Эсир вара аçăра мĕнле астăватăр? Мĕнле çын пулнă вăл?**

– Кĕлеткипе питĕ кĕрнеклĕ пулнă. Эх! Ăна утнине нихăçан та курман çав эпир. «Виçĕ пус та кирлĕ мар, утасчĕ пĕрре урам тăрăх», – пурнăçланма пултарайман ĕмĕтне çапла палăртатчĕ вăл.

Пирĕн атте питĕ активлă çынччĕ, вырăнпа выртнă пулсан та хаçат-журнал нумай вулатчĕ, яланах ăслă сĕнӳ-канаш пама пултаратчĕ вăл. Ун патне çамрăксем пĕрмай килетчĕç: шахматла выляма вĕрентетчĕ атте вĕсене. Ӳсĕрле пырса пирус ыйтакансене юратмастчĕ. «Ачасем, вĕренмелле, сенĕк йăтса çӳремелле мар. Халĕ вĕренмесен доярка та пулаймастăр», – тесе калатчĕ шăллăмпа иксĕмĕре. Шăрça пек илемлĕ те тирпейлĕ çыратчĕ. Анне учитель пулнă пулсан та, уроксем тума пире атте пулăшатчĕ, тĕрĕслетчĕ. Çынран нихăçан та кулмалла мар тесе вĕрентетчĕ. «Çын патĕнче ĕçлесе пулăшсан, тӳрех киле килмелле», – кӳршĕ-аршăпа çапларах хутшăнса пурăнмаллине калатчĕ. Тирпейлĕ, чăтăмлă та тӳсĕмлĕ пулнă атте. Шӳте ăнланатчĕ, хăй те аван шӳтлетчĕ. Çав тери пурнăçа юрататчĕ. Килĕштернĕ юрри пурччĕ унăн – «Я люблю тебя, жизнь...» Лайăх çын пулнă. Çакна туйсах ĕнтĕ эпир нихăçан та пуçа усса çӳремен.

**Н.НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Г. Волков (лараканни) мăшăрĕпе тата тăванĕсемпе.**

# Аттесене пĕлмесĕр çитĕнтĕмĕр

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине пула нумай ача тăлăха тăрса юлнă. Эпĕ вăрçăччен (1935-1940 çулсенче) çуралнисен ачалăхĕ пирки сăмах пуçарасшăн.

Хам эпĕ 1938 çулта çуралнă. Çичĕ çула çитсен шкула кайма пуçланă. Мĕн тăхăнса çӳренĕ-ха эпир шкула? Урара – çăпата, çурăм хыçĕнче – килте тĕртнĕ пиртен çĕленĕ кĕнеке сумки, алăра – пĕчĕк чернил кĕленчи. Чернилне юман çулçи çийĕнчи «çăпанран» тăваттăмăрччĕ. Вăл хура тĕслĕ пулатчĕ. Çуркунне шыв юхма пуçласан ура йĕпенесрен çăпата çумне куплак (3 см хулăнăш йывăç татăкĕ) çирĕплетсе паратчĕç. Çăва тухсан шкула çара уран кайнă. Пушмакне кăшт çитĕнсен çеç тăхăнма пултарнă.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленсен аннесемпе пĕрле çу каçичченех хирте тăрăшнă. Малтан колхоз уйĕнче çум çумланă, кайран утă пуçтарнă, тырă вырнă, ăна çапнă çĕрте йĕтем çинче пулăшнă. Тырă пуссине кашни çемьене виççе пайласа паратчĕç. Çурлапа выраттăмăр вара. Çак ĕçе тума йывăрччĕ. Ирхине ирех тăратаççĕ, каçхине хĕвел анас умĕн çеç киле таврăнмалла. Кăнтăрла шăрăх, пăчă, хĕвелĕ çунтарать. Çапах та пире: «Вырăр, вырăр. Çынсенчен кая юлсан намăс пулать, кахал теççĕ», – çапла калатчĕç аннесем. Эпир вара кахал ятне илтес мар тесе ывăнсан та выраттăмăр.

Уйра пысăк хуранта пăтă пĕçеретчĕç. Повар вара: «Пăтă çимелле!» – тесе кăшкăратчĕ. Ăна эпир, ачасем, питĕ хытă кĕтнĕ.

Пирĕн ялта, Муркашра, Давид Григорьевич Григорьев математика учителĕ пурччĕ. Унăн хăрах алли çукчĕ. Вăрçăран çапла таврăннă пулĕ ĕнтĕ. Вăл та аслă ачисемпе пĕрле тырă вырма тухатчĕ. Ачисем çурлапа выратчĕç, хăй вара хăрах алăпа, урапа кĕлтесем çыхатчĕ. (Ачасене кĕлте çыхма йывăр пулнă.) Кайран тĕмĕсем тата çĕмел тăватчĕ.

Пĕррехинче пурте канма ларнăччĕ. Пĕри Иток Ваçли вăрçăран таврăннине пĕлтерсен, хĕрарăмсем макăрма пуçларĕç. Вĕсем пурте хăйсен вăрçăран таврăнайман упăшкисене аса илнĕ ĕнтĕ. Эпир те макăртăмăр вĕсемпе.

Эпир, ачасем, Муркаш пуххине (ярмăркка) хытă кĕтеттĕмĕр. Вăл кун ытти ялта пурăнакан тăвансем Муркаша килетчĕç, вĕсене кĕтсе килте апат-çимĕçне тутлăрах пĕçеретчĕç. Килте ĕнесем усранă пулсан та, сĕт-çу мар, ытларах уйранне çеç ĕçнĕ эпир. Мĕншĕн тесен патшалăха çу, çăмарта памалла пулнă.

Пуху кун ачасене пĕрре карусельпе ярăнмалăх, пĕр стакан морс (пылак шыв) ĕçмелĕх укçа паратчĕç. Ытлашши укçа пулман, колхозра ĕçленĕшĕн укçа паман, çăкăр пĕçерсе çиме тырă валеççе панă.

Çапла иртнĕ тăлăх ачасен пурнăçĕ. Çавăнпа та калас килет: «Нихăçан та вăрçă ан пултăр!»

**Н. ИВАНОВА.**

Муркаш ялĕ.

# 45 çул иртсен тĕл пултăм

Москакасси ял тăрăхне кĕрекен Анаткас Хачăкра пурăнакан Василий Антонович Савельевпа вăрçă хирĕнче паллашни çакăн пек ларутăрура пулчĕ. Вăрçă хирĕнче виçĕ талăк хушши пĕр чарăнмасăр вăрçă шавĕ кĕрлесе тăнине пула малти ретре çапăçакан салтаксем патне хыçалти ретрен апат-çимĕç илсе пыма май пулман. Каçхине вăрçă шавĕ лăплансан кăна салтаксене кĕтнĕ апат-çимĕç килсе çитни çинчен пĕлтерчĕç.



Фасоль пĕçерсе килнĕ иккен. Фасоль пăрçине тултарнă котелока йăтса утатăп. Уйăх çĕр çине питĕ илемлĕн те янкăр çутатса тăрать. Çакна пăхса çамрăклăха аса илнипе чун хурланать. Камăн пурăнас килмĕ-ха, аннесем пире çуратнă çак çутă тĕнчере?

Ман умра винтовкине çакнă пĕр салтак пырать. Вăл та фасоль пăрçине тултарнă котелокпа. Пĕчченех чăвашла калаçса утать. Унăн калаçăвĕ паян та ман ăшран тухмасть: «Эй, çӳлти Турă, мана эсĕ паян чĕрĕ хăвартăн. Ыран та мана чĕрĕ хăварсам тархасшăн. Эпĕ çамрăк, манăн пурăнас килет».

– Эсир хăш районтан?– чăвашла ыйтатăп салтакран.

– Эпĕ Сĕнтĕр районĕнчен, Анаткас Хачăк çынни Василий Антонович Савельев пулатăп,– хуравларĕ салтак. (Вăл вăхăтра пирĕн район Сĕнтĕр районĕ пулнă).

– Эпĕ те Сĕнтĕр районĕнчи Кашмаш ялĕнчен, Вячеслав Иванович Иванов пулатăп,– пĕлтеретĕп салтака.

Чылай калаçса тăма ирĕк памарĕç. Тăшман снарячĕсем çывăхрах ӳксе çурăлма тытăнчĕç.

Тепĕр кунне ирхине, хĕвел тухас умĕн, пирĕн çарсем тăшман çине наступлени пуçларĕç. Хаяр та хĕрӳ çапăçура эпĕ вăрçă хирĕнче паллашнă ентешĕм В. Савельев кăкăр витĕр пуля тухнипе питĕ йывăр аманать. Йывăр аманнăскере малтанхи пулăшу панă хыççăн санитаркăсен аллине панине эпĕ халĕ те лайăх астăватăп.

В. Савельева госпитале ăсатнине пĕлтерчĕç санитаркăсем. Вăл вилчĕ пулĕ тесе шутласа пурăнтăм. Вăрçă эпир çĕнтернипе вĕçленсен эпĕ тăван яла таврăнтăм.

Вăрçă хирĕнче паллашнă В. Савельевпа вара вăрçă хыççăн 45 çултан тепĕр хут тĕл пулма тӳр килчĕ. Муркаш пасарĕнче тĕл пултăм ăна. Вăл вилмен иккен. Вăрçăра паллашнине, çапăçури кунсене аса илсе нумайччен калаçса лартăмăр. Мана тĕл пулсанах унăн куçĕ шывланчĕ.

В. Савельев кăçал 86 çула кайрĕ. Москакасси ял тăрăхне кĕрекен Анаткас Хачăк ялĕнчех хăйĕн ĕмĕрне ирттерет.

**Вячеслав ИВАНОВ,**
**вăрçă ветеранĕ.**

Кашмаш ялĕ.

# Уява тирпейлĕн кĕтсе илĕç

Аслă Çĕнтерӳ уявне Тойкилтĕсем вăрçăра пуç хунă салтаксене асăнса лартнă палăк тавра тирпей-илем кĕртсе кĕтсе илеççĕ. Палăка кунти шкул коллективĕн пуçарулăхĕпе, ял тăрăхĕн администрацийĕ пулăшнипе Çĕнтерӳ кунĕ 60 çул тултарнине халалласа уçнă пулнăччĕ. Кăçал вара Тойкилтĕ шкул администрацийĕ каллех пуçару кăтартса 4 пин тенкĕлĕх хăма туяннă. Ăшă кунсенче палăк тавра çĕнĕ карта тытас ĕçре Михаил Петров, Владислав Сильвестров, Владимир Александров, Сергей Яников, Леонид Охарин тата Дмитрий Федоров активлă пулнă. Ял тăрăхĕн администрацийĕ вара сăрăпа, киçтĕксемпе тивĕçтернĕ.

– Çак ĕçе пурнăçласси çинчен шухăшĕ чылай маларах пулнă ĕнтĕ. Пĕлтĕр кĕркунне карта юписене улăштарса



çĕнетрĕмĕр. Кăçал хăма туянса ял çыннисемпе пĕрле пĕчĕк ниме турăмăр теме те пулать. Тойкилтĕ, Шаптак тата Платкасси ялĕсенчен пурĕ 184 çын вăрçа тухса кайнă. Вĕсенчен 72-шĕ çеç каялла таврăннă. Вăрçă хирĕсенче пуç хунă 112 паттăра сума суса вĕсене асăнса лартнă палăка тирпейлĕ тытасси пирĕн тивĕç пулса тăрать, – тет Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн директорĕ Игорь Аркадьевич Сергеев. Çакна тĕпе хурсах вăл ĕçе аван йĕркелессипе тăрăшнă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**